

Савели Уварĕ

# ТЫМАР

Центр библиотеке
г. Кумертау.
Хаклă тăвансем,
Тăванăмсем!
Сĕм авалтан килнĕ
çепĕç те илемлĕ тăван
чĕлхене упраса хăварăр!
автор: [illegible]
27.04.2016 год.

САВЕЛИ УВАРĔ

# ТЫМАР

Сăвăсем. Калавсем.
Очерк.

Стерлитамак-2013

ББК - 84(2Рос=Чув.) 6-4
У - 18
ISBN 978-5-902249-07-8

*Хĕрĕме, йĕкĕреш ывăлăмсене халалласа*



## Саспа каланă шухăшăм

Эпĕ шкулта вĕреннĕ вăхăтра халăх историне, хамăр йăхнесĕл кун-çулне, авалăхне тĕпчемен. Çтерлĕ районĕнчи чăваш ялĕнче Ямансасра(Ишпарсово) çуралса(28.03.1946ç) атте-анне, кукаçей-кукамай чĕлхипе калаçса, ӳсе, ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан, 1963çул Стерлитамакри пединститута физмат факультетне вĕренме кĕтĕм.

Физика уйрăмне пĕтерсе диплом илнĕ хыççăн, пĕр çул Çар хĕсметĕнче пултăм. Кайран 40 çул хушши вырăс шкулĕнче физика учителĕ пулса ĕçлеме тӳр килчĕ.

Маншăн чăваш чĕлхи сăрт аркинчи тĕтрелĕхре юлнă пекех пулчĕ.

Çĕнйĕркелӳ(перестройка) хыççăн тĕрлĕ темăпа кĕнекесем тухма пуçларĕç. Шумерсен астрологине тĕпченĕ май чăваш сăмахĕсем тĕл пулчĕç. 6 пин çул ĕлĕк-авал каланă сăмахсем чăвашла пулни пит тĕлĕнтерчĕ. Тăван чĕлхене тĕпчеме

пуçларăм. Сăвăсем, калавсем çырса «Урал сасси» хаçата ятăм. Манăн хайлавсене асăрхарĕç. «Хавхалану çăлкуçĕ» фестивалĕн 2007 çулхи лауреачĕ пулнине пĕлтерчĕç. Хаваслă кăмăлпа Ямансас яле 240 çул тулнине халалласа хамăн сăвăсемпе калавсен пуххине «Савнă ялăм – Ямансас»(2010ç.) кĕнеке те пичете кăлартăм.

Мĕнле чĕлхепе калаçса çăкăр çисен те манăн шухăш хунавĕ чăваш тымарĕнчен шăтса ÿснине ăнлантăм.

«ТЫМАР» - саспа каланă шухăшăм, ытларах шкулта аслă класра вĕренекен ачасем вали çырнă хайлав.

**Автор – Уваров Алексей Михайлович(Савели Уварĕ).**

**Об авторе**

**Алексей Уваров**

Ветеран педагогического труда, проживает в поселке Маячный в г. Кумертау. В своих стихотворных строчках описывает красоту природы своего родного края, пишет о человеческих возвышенных чувствах.

Номинант фестиваля поэзии «Родники вдохновения – 2007» (номинация «Башкортостан, пою я песнь тебе»).

Поэтический альманах. РАДУГА (г. Белебей, 2009 г. Стр.92.)



# ÇĂТМАХ

Çын тÿсейми сивве те
Çурхи кун çемĕçтерет.
Куç виçейми уй-хирте
Ыраш пусси ешерет.

Ешĕл тĕрĕпе каратъ
Сар Хĕвел шур хурăна.
Вăштăр çил çÿçне туратъ,
Савăк лăпкаса ăна.

Çаран çинчи сар çеçки
Куçа кĕрсе илĕртет.
Сывлăш тутлă çав тери,
Сăра пекех ÿсĕртет.

Ĕçчен хуртсем çу килсен
Пыл пуçтарас вĕллене.
Шăпчăк юрри илтĕнсен
Вĕçет чунăм тÿпене.

Çак ырлăхлă вăхăтра
Кăмăл телейпе тулатъ.
Уйлатăп эп ăшăмра:
«Çăтмах Çĕр çинче пулатъ».

* * *

Кимĕ евĕр чӳхенеççĕ
Çепĕç, кăтра çулçăсем.
Ешĕл хум çийĕн ишеççĕ
Ялтăр хĕвел шевлисем.

Шухă çилĕ савса лăпкать
Йăрăс хурăн пикене,
Çулçа сирсе уçса пăхать
Унăн шурă кăкăрне.



## ÇУМĂР

Вăйлă çумăр ташларĕ
Аслати кĕввипеле.
Çамрăк хурăн каşларĕ
Кăтра çӳçне силлесе.

Çулçă çурса пĕтмесĕр
Çĕмĕрт çеçке кăларчĕ.
Йĕрме лараи хĕр евĕр
Шур пĕркенчĕк пĕркенчĕ.

Пехил пачĕç çĕмĕрте
Аслатипе лĕп çумăр:
Йышлă çырла ӳстерме
Çĕр сĕткенĕ пулăштăр.

…Чĕре вутне сӳнтертĕм
Тăрса çĕмĕрт айĕнче.
Куççуль йĕрне пĕтертĕм
Çуса çумăр шывĕпе.

## САВНĂ САМАНТ

Каç чаршавĕ карăнсан,
Çич çăлтăрлă алтăртан
Тӳпене мерчен сапсан
Юрă тăкаç шăпчăксем.

Ытарми çу каçĕсем!
Тӳпе кӳлле ӳпĕнсен,
Пулăсем çăлтăр пухсан
Чĕре çунать савнисен.

Укăлчара каççерен
Калаçнă чух пит тату,
Çуралчĕ ман чĕрере
Нихçан сӳнми юрату.



## ÇĔР ЧĂМĂРĔ ÇАВРĂНАТЬ

Кăвак тухăç шăтарса
Хĕвел кăвар пек тухать.
Çĕре кун улăштарса
Çĕр чăмăрĕ çаврăнать.

Икĕ чĕре пĕрлешсен
Тепĕр чĕре кун курать.
Туртăм вăйпа килĕшсе
Çĕр чăмăрĕ çаврăнать.

Инкек-синкек пулсанах
Тӳсме,чăтма Тур хушать,
Мĕншĕн тесен çав-çавах
Çĕр чăмăрĕ çаврăнать.

Кĕтнĕ телей килнĕ кун
Кăмăл шерпетпе тулать.
Мĕншĕн-ши каллех çав кун
Çĕр чăмăрĕ çаврăнать?

* * *

## СУЯ ХИСЕП

Куккук шăпчăк ӳстерипе
Хисеплĕ саслă пулать.
Ют йăвара вăл ӳснипе
Шăпчăк чĕпĕсĕр юлать.

## ХУРĂН ШЫВĔ

*Пирвайхи сăвăсем*

*(Тăван Атăл-2011ç №8)*

Çурхи вăрман варринче
Çÿренĕ чух пĕчченех
Шурă хурăн кăкринчен
Сыпрăм сиплĕ сĕткенне.

Тăри сенкер тÿпере
Савăнтарчĕ юррипе,
Тăрнасем те çурçĕре
Вĕçсе иртрĕç картипе.

Çунат сарсан çуркунне
Мăшăр шырать кашниех.
Çавăнпа пуль пĕр-пĕрне
Савас килет хĕрÿрех.

Илĕртÿллĕ хĕр-пике
Чеен пăхсан куçăмран,
Çурхи кунсен еккипе
Канăç-тăнăç пĕтрĕ ман.

Çурхи вăрман варринче
Сирсе кăтра çивĕтне,
Шурă хурăн кăкринчен
Ма сыпрăм-ши сĕткенне?



## ЁМĔТЛЕНЕТĔП КУЛЛЕНЕХ...

Сăртри вăрман уçланкинче
Лапка-лапка юр çăвать.
Шурă хурăн тураттинчен
Шап-шур çивĕтсем уртать.

Юр хÿнипе, пуснипе
Çĕмĕрт йывăç авăнать.
Çирĕк муртак пулнипе
Шарт! Тăвать те хуçăлать.

Чăркăш чăрăш лăссисем
Симĕс тĕсне çухатман.
Çу кунĕсен ăшшисем
Паянччен манăçман.

Пуçне тайман, авăнман
Юр капанне Улăп пек
Йăтса ларать ват юман
Хăйĕн çирĕп пĕвĕпе.

Ёмĕтленеп кулленех
Çĕмĕрт çеçке çурасса,
Чунри сивĕ пăр кĕçех
Тумла пулса юхасса.

## КĔРХИ КĔВĔ

Кĕрхи вăрман йăлкăшать:
Кăвар тĕслĕ пилешĕн
Çулçи çĕре тăкăнать.
Те кавирпе витесшĕн?
Тăрнасем, ав, тӳпере
Кăнтăр енне вĕçеççĕ.
Кăрлик! Теççĕ те, пире
Пĕрле вĕçме чĕнеççĕ.
Кайăк пулса каям-ши
Сичĕ юта вĕсемпе?
Çĕнĕ йăва кăрам-ши
Унти ăшă çĕрсенче?
Эх! Тăрнасем, сирĕнпе
Çук, вĕçместĕп кăнтăра.
Хăрамастăп сивĕрен.
Хăвармастăп мăшăра.
Çак çуралнă çĕршывра
Юрату эпĕ тупрăм.
Пĕрре савнă тантăшра
Туслăх-шанчăклăх туйрăм.

## ЫРĂ ÇĂКА

Чĕре евĕр çăка çулçи,
Куçăма пит илĕртет.
Техĕмлĕ, черченкĕ çеçки
Тĕрлĕ чир-чĕртен сиплет.



## ШĂПЧĂК ЮРРИ

Сирень çеçке çурсанах
Васкап яла сипленме.
Юрататăп каçсерен
Шăпчăк юрри итлеме.

Ĕмĕр асра юлнă ман
Яла шăплăх хуплани,
Çĕрĕн-кунĕн шыв арман
Пĕр тикĕссĕн ĕçлени.

Каçран шăпчăк улăхра
Касса кайса юрлани:
«Чуп ту! Чуп ту! Ан хăра!»
Тенĕ евĕр илтĕнни.

Сирень çеçке çурсанах
Тăван яла васкатăп.
Манса хула шăв-шавне
Шăпчăк юрри тăнлатăп.

## ТЫМАР ЯРСАН...

Тĕреклĕ йывăç-тымарпа.
Чĕлхе тымарĕ-халăхра.
Тымар ярсан юрату
Пулать çемье пит тату.

Тырă-пулă, ÿсен-тăран
Ÿсет тымарлă пулсан.
Çĕрти тымар сĕткенлĕхĕ-
Этемĕн тĕреклĕхĕ.



## КАÇХИ ВУЧАХ

Юратура иксĕмĕр
Телей тупнă вăхăтра:
«Пĕрле ĕмĕр ирттерер »
Тени халь те асăмра.

Шăнса кÿтсен-ăшăтма,
Аташсассăн-çул тупма,
Пĕрне-пĕри пулăшма
Тунăччĕ ун чух тупа.

Каçхи сулхăнри вучах,
Пултăм иккен тĕттĕмре,
Кирлĕ пулмарăм пачах
Хĕвел хĕртсен тÿпере.

# КĔРЕШ ЮМАН

Вăрман хĕрринчи сăртра
Пĕр-пĕччен ларать юман.
Вăрманта, шалта вара
Шурă хурăнлăх куран.

Хĕллехи юр пусăмне,
Асар-писер тăвăлне
Чăтса иртерет юман-
Çил куллийĕ вăл пулман.

Çуркуннепе хурăнсем
Çулçă çурчĕç чи малтан.
Çеçкере, ав, çĕмĕртсем-
Капăрланнă сĕм вăрман.

Асап курнă ват юман
Кăчăкисене уçман.
Çурхи ăшша шанмасăр
Çу кунне кĕтет хаман.

Çурхи çеçке тăкăнать
Пĕрре сивĕ витнипех.
Савнă пике юпăнать
Сивĕ сăмах илтнипех.



# ТЫМАР

*«Чĕлхе тымарĕ пиншер çул улшăнмасть».*
*Сарри Миши.*

Тĕрлĕ сасă кăларса
Этем калаçма пуçлать.
Ăруран ăру пулса
Чĕлхе пĕрешкел пулать.

Сĕм-сĕм ĕлĕк авалтан,
Мĕнпур халăхран малтан,
Пăхăр-тимĕр шăратма
Пĕлнĕ шумерсем таçтан.

Евфрат шывĕ хĕрринче
Тырă-пулă ÿстернĕ.
Тĕрлĕ халăх çĕрĕнче
Сутма-илме çÿренĕ.

Шумерсен ар çыннисем
Ятарлă шкула килнĕ.
Çырма, шутлама вĕсем
Кунта тимлĕ вĕреннĕ.

Ывăс пек тăм катăка
Чĕрсе, паллăсем туса
Шумер халăх пуçласа
Хунă сăмаха çырса.

Çичĕ пин çул ĕлĕкрен!
Чул çине чĕрсе çырнă
Çыру тупса тĕпчесен
Чăваш сăмахĕ тухнă.

* * *

Паянхи календаре,
Çичĕ кунлă эрнене,
Шумерсем сĕм авалтан
Йĕркеленĕ чи малтан.
Çичĕ Турă тӳпере
Пуррине пит ĕненнĕ,
Çавăнпа та эрнере
Çичĕ кун пулать тенĕ.
Хĕвеле- Аслă Турă,
«АТА»- тесе каланă,
Тĕнче тытакан Турă,
Чĕртекен те çав пулнă.
Хушши çĕнĕ уйăхсен
Тăват эрне пулнăран,
Уйăх «Вăхăт» виçекен
Турă-«НАННА»-шутланнă.
Хĕвел тавра çаврăнса
Планетăсем çӳреççĕ,
Çут çăлтăр пек курăнса
Тӳпе тăрăх куçаççĕ.
Телескопсăр хăр куçпа
Пиллĕкĕш курăнаççĕ,
Çӳренипе шав куçса
Турă шутне кĕреççĕ.
«Суту-илӳ»- Меркурий,
Марс вăл «Вăрçă» Турри,
«Вилĕм» Турри- Сатурн
Тесе шумер пураннă.



Хĕвел çывăх пулнăран
Венера планетăна
Ирпе, хăш чухне каçран,
Чи çут çăлтăр пек куран.
Шумерсем ку çăлтăра
«АТА» Турра юнашар
«Юрату» Турри «ИШТАР»
Çӳрет тенĕ тӳпере.
Вĕсем Турра чысласа,
Пирамидă хăпартса,
Тăррине лаптак туса
«ИШТАР» кĕлетки лартнă.
«МАРДУК» Турра та вĕсем
Çĕре «Сыхлакан» тесе
Пирамидăна лартнă.
Ку вăл Юпитер пулнă.
Кунашкал йăла вара
Египета та куçнă,
Унти пирамидăра
Фараона пытарнă.

* * *

Тĕне кĕмен чăвашсен
Хушаматсăр ят пулнă.
Турăран ĂС ыйтса
Ачасен ятне хунă.

«ИШТАР ПАР ĂС» - тейиччен
«ИШПАРĂС» - кĕскен чĕнниĕ,
Тата вырăс чĕлхинче -
«ИШПАРС» - пулса кĕскелнĕ.

Тăвар сутăç - ИШПАРĂС
Çтерлĕ енче ял хывнă.
Кайран ку яла вырăс
ИШПАРСОВО – çыртарнă.
Хĕрсенче те чăвашсен
ĂС сыпăклă пур ятсем.
НАРСПИ пулать тĕслĕхрен, -
Виç сăмаха кĕскетсен.

НАР вăл – Хĕвел авалтан
Шур чăвашсен пулнăран
«Нарспи» поэмăра çапла
Çырнă йĕркесем куран:
«Нар пек хитре хĕрĕсем…»
НАР та ĂСЛĂ пул ПИКЕ,
Ят хурсан – НАР ĂС ПИКЕ,
Кĕскетсе çырсан – НАРСПИ,
Калать чăваш - НАРĂСПИ.



Анчах, анчах…
Патшалăхне шумерсен
Семит куçса çӳренсем
Тăтăш вăрçăпа кĕрсе
Тухнă ватса-çĕмĕрсе.

Ăсчахсем палăртнипе
Йывăççи чăваш чĕлхин
Шумерсен тымарĕпе
Ешерет халь те пулин.

Чăваш чĕлхи-авалхи
Сасăсенчен вăл пуян.
Вăтăр çичĕ саспалли
Çырура усă куран.

Мăнаçлă эп ачаран
Чăвашла калаçнăран.
Асаннемĕн халапĕ
Халĕ те каймасть асран.

Хĕр чăвашла калаçсан
Чĕкеç сассине илтетĕн.
Пике юрă юрласан
Шăпчăк мар-ши ку тетĕн.

Çак илемлĕ чĕлхене
Манас марччĕ ĕмĕрне.
Вăй парать вăл чĕрене,
Пурнăç тытма вĕрентет.

# СĔНӲ

Хĕрӳ, хӳхĕм пикене
Турă пӳрнĕ юратма,
Çырла евĕр тутине-
Яш савнийĕ чуп тума,
Тулли икĕ кăкăрне-
Йышлă пепке ӳстерме,
Çемçе çепĕç чĕлхине-
Чĕкеç евĕр пӳплеме.
Анчах пур-ха тĕнчере
Чее тăшман, чĕмере-
Хĕре пирус хыптарса
Ярасшăнах вăл чире.
Çамрăк хĕр пирус туртсан
Малашлăхĕ çук ачан.
Калатăп чун – чĕререн:
«Çав мура ЭС ан тытан.
Чăваш пики авалтан
Ăна çăвара хыпман.
Çавăнпа çут тĕнчере
Чăваш çынни çухалман».



# ШУРĂ ЮМĂÇ – ШУР ЧЕЧЕК

Уй-хирти çул хĕрринче
Сиплĕ шур чечек ларать.
Шурă кăшăл варринче
Те шĕл-кăвар йăлкăшать?

Çулăм тивнĕ чĕрипе
Сар хĕр тухать уй-хире,
Шур чечекĕн пилĕпе
Юмăç тăвать вăл пĕрех.

Чун телейлĕ пулĕ-ши?
Пĕлме пулăш чечекĕм:
Савĕ-ши е савмĕ-ши
Хура куçлă савнийĕм?

Чечекĕн шур çунатне
Пĕрчĕн-пĕрчĕн вăл татать.
Варли ăна савине
Чечек тĕрĕсне калать.

## ЙĂМРА АЙĔНЧЕ

Кайăк-хурсен çулĕнчен,
Çăлтăр ÿкрĕ тÿперен.
Тулли уйăх çутипе
Ачашларĕ питĕмрен.

Капăр çÿçлĕ ват йăмра
Çупăрларĕ пуçăма.
Яш вăхăтăм асăмра-
Пăркăчларĕ чунăма.



## ТИВЛЕТ ĂÇТА?

Çырла пиçнĕ улăхра,
Пыл курăкĕ-çеçкере.
Ырă шăршă сывлăшра,
Килентерет вăл пире.

Хăнари пек çанталăк
Пыл ĕçтерчĕ хистесе.
Эп ĕçменчĕ çулталăк-
Халĕ ячĕ ÿсĕртсе.

Кăтра çÿçлĕ хурăна
Ыталарăм куллинчен,
Лăпка-лăпка вăл мана
Тем каларĕ çил çинчен.

Пăшăл-пăшăл çулçăсем
Маиран ыйтнăн туйăнчĕ:
«Йăл кулаççĕ тутусем-
Тивлет ăçта тупăнчĕ?»

## ХĔРЛĔ ПАЛАН

Кĕрхи тĕспе çупнăçем,
Хĕвел çинче выляса,
Эй, вĕçеççĕ çулçăсем!
Кайăк евĕр ярăнса.

Палан пĕрчи- çут мерчен
Уйрăлаймасть йывăçран.
Хăрамасть вăл сивĕрен-
Ялан хĕрлĕ пулнăран.



## ИРХИНЕ

Вутпуççи пек шăранса
Тухăçра Хĕвел тухать.
Хĕр ыйхăран вăранса
Ĕнине сума ларать.

Инçетри сĕм вăрманта
Ўхĕ темшĕн ўхлетрĕ.
Шăпчăк улăхра – шалта
Сывлăш чĕв-чĕв чĕтретрĕ.

Яш вăхăтри пек ирпе
Аслăк çинче вăрантăм.
Утрăм çимĕç пахчипе,
Чечексене шăвартăм.

Сывлăмлă курăк çинче
Чупрăм çарран ача пек.
Кăмăл çĕкленĕвĕнче
Тупрăм ирхи телее.

## ÇУРХИ МУЗА

Кăрли-и-ик! Кăрли-и-ик! Сас парать
Пĕччен тăрна тӳпере.
Салху туйăм çуратать
Унăн сасси чĕрере.

Чĕнет-ши вăл мăшăрне?
Хăй аташса юлман-ши?
Ырнă пулсан кӳл хĕрне
Ма-ха канма анман-ши?

...Вĕçрĕ тăрна çурçĕре
Сывлăш хумне çĕнтерсе.
Пăхса юлтăм тинкерсе,
Темпĕн ыратрĕ чĕре.

Хурăн çинчи шăнкăрчсем
Çунат çапса юрларĕç.
Куççуль евĕр тумламсем
Ывăç çинче ташларĕç.

* * *

Çăлтăр çутă çунсан та
Кăнтăрла пулмасть курса.
Ăшра кăвар пулсан та
Ăскăча пулмасть хурса.



## ВИÇĔ ХУРĂН

Виçĕ хурăн пĕр тĕпрен
Çемье пекех ӳсеççĕ.
Пĕри-хунав-пит черчен,
Иккĕш ăна упраççĕ.

Лăпкă çилпе хурăнсем
Пăшăл-пăшăл пуплеççĕ.
Кăтра ешĕл çулçисем
Алă çупса ташлаççĕ.

Шур хурăнсем туслăран
Ӳсет хунав ырлăхра.
Асар-писер çил тухсан
Хӳтлĕх çитет вăхăтра.

Çемьере туслăх пулсан
Ӳсме ансат пепкене.
Тăлăха тăрса юлсан
Шеллес килет мĕскĕне.

* * *

Инçе çула çӳреме-
Шывлă-юрлă çурхи çул.
Ăрăскаллă эп теме-
Çурмалла-телей, куççуль.

# ЮН ВĔРИ

Виçмен мулне- çуттине
Хĕвел сапнă юр çине,
Юр пĕрчийĕ-мерченӗ
Илĕртет куçăмсене.

Ваталнă хуп тунине,
Вăрăм ўснĕ çивĕтне
Шур пĕркенчĕкпе витсе
Пулнă йăмра хĕр-пике.

Эреветлĕ чĕнтĕрлĕ,
Шурă çинче хĕрлĕллĕ,
Лутра тĕмлĕ паланĕ
Кĕске хитре кĕрĕклĕ.

Асамлă Çанталăкне,
Çăтмахри ўкерчĕкне,
Тур панă пуль киленме
Ярĭ уçса алăкне.

Сенкер Тинĕс тўпери
Лăпкă паян çав тери.
Çунат сарса уçлăха
Вĕçетĕп-ха, юн-вĕри.



# ХĔВЕЛ ТУХНĂ ЧУХ

Сарă хĕвел тухнă чух,
Тўпене чĕнтĕрлесе,
Хавхаланать манăн чун
Çĕн кунпăн хĕпĕртесе.

Чĕрик çерçи хавассăн,
Пилеш тураттн çинче
Пуçне пăрать- курасшăн
Кантăкран пўрт хуçине.

Таçта вăрман хĕррипе
Карăш чĕпни макăрать.
Çĕре хĕвел хĕртнипе
Пĕтĕм тĕнче вăранать.

Ирхи сывлăм- куççульсем
Шур чечекĕн типеççĕ.
Юрату суранĕсем
Чĕремре ўт илеççĕ.

## АСРИ ĂН

Вĕлтрен яшки, ыраш çăкăр-
Выç хырăма лăш тунă.
«Вĕрен, ĕçле, пул эс паттăр»-
Ăс-тăнĕ асра юлнă.

## ВАТӐ ЙӐМРА

*Савельев САС çыравçӑ*

Хула шавӗнчен писсен
Çул тытатӑп ялӑма.
Тип Çырма патне çитсен-
Çӑл пӗвине, айлӑма.

Астӑватӑп: ача чухне
Çынсем, анса çырмана,
Пӗвелетчӗç çуркунне
Ёçлеттерме армана.

Тайӑлнӑччӗ ун чухнех
Виç хӑлаçлӑ ват йӑмра.
Эп, хӑпарса ун çине,
Пӑхнӑ пулӑ ишнине.

Яш чух, çумне таянса,
Кӗтнӗ чухне савнине
Йӑмра мана пуçӑмран
Ачашлатчӗ çулçипе.

...Ларать, кашлать-ха йӑмра,
Иртнине асилет пуль.
Асилмелли пур вара:
Ӳснӗ, тӳснӗ ик çӗр çул.



## ТУНСӐХ

Кирек ӑçта кун кунлап-и -
Чун туртать тӑван яла.
Манма май çук Тип Çырмари
Улӑм витнӗ кил-çурта.

# МАНА ПӐРНИ ӐҪТА-ШИ?

Тĕпсĕр сенкер тӳперен
Кăпăш, ҫемҫе юр ӳкет,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пит хуллен
Ешĕл уҫăма витет.

Асра – телейлĕ самант.
Ҫак чечеклĕ улăхра
Татса ҫирĕмĕр саппа
Ҫырла, пиҫнĕ вăхăтра.

Хурăн сулхăнне тăрса
Итлерĕмĕр шăплăха.
Ҫил, ҫулҫăпа шаярса,
Хăваларĕ шăрăха.

Кăвар тĕслĕ кĕр ҫитсен
Ӳкрĕ ҫулҫă ялкăшса,
Сив ҫурҫĕртен ҫил вĕрсен,
Сӳнчĕ юрпа хутăшса.

Юрпа хупланчĕ илпек,
Тупас ҫук кунта майне.
Мана пӑрни ҫулҫӑ пек
Юлмарĕ-ши юр айне?



# ШУХӐШӐМ

Йăлтăркка юр ҫиĕпе
Йĕлтĕрĕмпе шăватăп.
Шух вĕрекен ҫилĕпе
Кăмăлăма уҫатăп.
Эх! Ҫанталăк илемĕ!
Сенкер куҫлă пике пек.
Ӑшăтаймасть хĕвелĕ –
Юта кайнă савни пек.

Ҫырла пиҫес ҫарансем
Юр айĕнче , ыйхăра.
Яштак пӳллĕ хурăнсем
Кĕрт ăшĕнче,хуйхăра.
Килсе ҫитĕ ҫуркунне,
Хĕвел пăхĕ ăшăтса.
Юр ирĕлсе кӳль енне
Юхса кайĕ шарласа.

Манăн кăпа пуҫăмри
Шурă ҫӳҫĕм хуралмĕ,
Ҫамрăклăхăм инҫетре-
Сурхи кунпа килеймĕ.

* * *

Ҫĕмĕрт ҫеҫки юр пек кăпăш
Пит илĕртет-ҫке куҫа.
Ҫурхи сим пыл пекех сывлăш
Ма-ши ҫавăрать пуҫа?

## КӲЛĔ ТĔКĔРĔ

Тарăн кӳлĕ варринче
Йăмра усăнса ӳсет.
Шурă пĕлĕт хушшинче
Пулă ярăнса ишет.

Сутă кӳлĕ тĕпĕнчен
Ярăм-ярăм ялкăшать.
Ылттăн-кĕмĕллĕ мерчен
Вĕттĕн-вĕттĕн сапăнать.

Канăçлă çак тĕнчере
Йăмра çумне тăратăп.
Сисĕм-туйăм – тĕлĕкре.
Чăн-чăн çăтмах куратăп.

Турă панă саманта
Ывăç çине илĕттĕм.
Кĕске вăхăт пулсан та
Кайăк пулса вĕçĕттĕм.

Йăмра çинчен ярăнса
Çулçă ӳкрĕ шыв çине,
Ункă пек хум явăнса
Ватрĕ кӳлĕ тĕкĕрне.



## ÇУРХИ КУН

Çурхи çил пит шаярса
Хĕве кĕрсе кăтăклать.
Хĕвел тарават пулса
Хĕрӳ хĕмне сапалать.

Тăри сенкер тӳперен
Ман çине юрă тăкать.
Сăртри юр ирĕлнĕрен
Шăнкăртатса шыв юхать.

Пит хӳхĕм пике-тусăм
Мана куçран пăхнăччĕ,
Кӳтнĕ хĕллехи туйăм
Çурхи юр пек ирĕлчĕ.

* * *

Мулпа пуян - вăхăтлăх,
Ăспа пуян – ĕмĕрлĕх.

## РАÇÇЕЙРА

Аслă ăру истори тăвать,
Çамрăк ăру ăна пăсать.

* * *

Мĕншĕн кĕрхи Вĕрене
Хĕрлĕ тĕсе пĕвентĕн?
Тумла юн пек Çĕр çине
Çулçусене ўкертĕн?

Те Хĕвел ăшăтмарĕ
Санăн черчен çулçуна?
Е Сивĕ суранларĕ
Пит яштака вуллуна?

Ах! Манăн та ыратса
Сурать чунăмра суран.
Вăхăт-вăхăт сăрхăнса
Тумлать куççуль куçăмран.

Эх! Йывăçăм, Вĕрене
Хĕл сиввине тўсесчĕ.
Сурансене сиплесчĕ.



* * *

Урнă тейĕн – çанталăк
Кăтăрать те кăтăрать,
Чарăнмасăр виç талăк
Кассăн-кассăн юр тăкать.

Кунпа çĕр те арпашрĕ.
Çук-шим Хĕвел тўпере?
Тăтăш савнин сăнарĕ
Ма килет-ши тĕлĕкре?

Анчăк евĕр çил-тăман
Элле йĕрет, те ўлет.
Кўтсе çитнĕ чунăм ман
Санпа тĕл пулу кĕтет.

## ШУРӐ-ШУРӐ ЮР ӲКЕТ

Кӗртен шӑтнӑ уҫӑма
Хӗвел пулӑхлӑх кӗртет.
Чӗрери вут-ҫулӑма
Юрату хӗмӗ чӗртет.

Савнин йӑмӑх куҫӗсем
Чуна витӗр тирӗнеҫ.
Хӗрлӗ-кӗрен тутисем
Мана питӗ илӗртеҫ.

Хитре-хӳхӗм пикене
Ытама тунсӑх хистет.
Вӑтанчӑк хӗр кевтине
Каҫ чаршавӗпе витет.

Кӗрхи уҫӑм ешерет...
Шурӑ-шурӑ юр ӳкет...



## ГИТАРА

Пӑрса карнӑ хӗлӗхсемпе
Гитара куҫҫульсӗр йӗрет,
Ҫеммин ҫепӗҫ сассисемпе
Кичемлӗх тӗтри сирӗлет.

Каҫхи ҫӑлтӑр - ҫӳл тӳпери,
Кӑтра пикене куҫ хӗссен,
Ҫунать вучах - чун-чӗрери,
Гитарӑ сасси илтӗнсен.

* * *

Кёрхи кун сём вăрмана
Тĕрлĕ тĕспе пĕвететь.
Илемлĕ тĕрĕ мана
Чăпĕпе тĕлĕнтерет.

Çулçăсем çине Хĕвел
Шевлисене сапалать.
Хунав пуласшăн йĕкел
Çĕре ўкее акăнать.

Çак асмлă вăрманта
Аса килтĕн эс мана.
Савăк савнă самантa
Манса пулмасть хамăн та.

* * *



* * *

Хĕлле Хĕвел юр пĕрчине
«Савап»-тесе шантарчĕ,
Йĕри-тавра шевлисене
Сапа-сапа тултарчĕ.

Çурхи Хĕвел хĕмленсенех
Юра часах йĕртерчĕ,
Тумла туса куççулĕпех
Юхан шывпа юхтарчĕ.

* * *

# ТЕЛЕЙ

Сиплĕ çумăрĕ çурĕ
Калчасене вăй парса.
Пике- хурăна аврĕ
Ашкăнчăк çил алхасса.

Ăшă çумăр çутăрах
Шур чечекĕме çуса.
Ман чĕреçĕм таптăрах
Çĕнĕ кунпа савăнса.

Çумăр хыççăн сар хĕвел
Ăшшăн лăпкĕ пуçăмран.
Иртнĕ пурнăç – йўç йĕкел-
Катса, тутанса пăхсан.

Çул хĕрринчи юман пек
Ўсрĕм пĕччен ачаран.
Ту тăрринчи чăрăш пек
Хўтлĕхре пулса курман.

Телей тупрăм ăнсăртран
Сар пикене тĕл пулсан.
Хĕпĕртерĕм пур чунтан
Пепкесемпе çурт тулсан.



# МĂНУКĂМПА

Тўпе арки тĕрлесе
Тухăçра Хĕвел тухать.
Ирхи тĕтрене сирсе
Кўлĕре пулă вылять.

Çак илемлĕ самантра
Мăнукăмпа саватпăр.
Авăра ярса вăлта
Çыр хĕрринче ларатпăр.

## ХĂШĔ ЧЕЕРЕХ?

*Арслан мăнукăма.*

Çÿлĕ-çÿлĕ тÿперен
Çăлтăр евĕр юр ÿкет,
Шур хурăна сивĕрен
Мамăк тутăрпа витет.

Йĕрне пытарса куян
Каллĕ-маллĕ сиккелет,
Шăнса кÿтмессе паян
Юртан хÿтлĕх хатĕрлет.

Чупать тейĕн çип карса,
Тÿп-тÿрĕ йĕр хăварса,
Чее тилĕ пит каскать,
Юр çинче темĕн шырать.

Акă, тăчĕ чарăнса,
Мулкачăн йĕрне курать,
Хăш еннелле пăрăнса
Кайнине тимлĕн пăхать.

Ик урине юнашар,
Иккĕшне умлă-хыçлă
Пусса сикет, суя мар,
Куян- чалăшнă куçлă.

«Ик путăкĕ пĕчĕкрех-
Малти урисен йĕрĕ»-
Çапла уйласа тилĕ
Мулкача тытма кайрĕ.

Мулкачăн йĕрĕ анчах
Улталарĕ çав тилле,
Çук, пĕлмерĕ вăл пачах
Йĕрлеме хăш еннелле.



Мулкач урине тăссан
Кайри малтинчен вăрăм,
Кайрине мала пусса
Сикет путăк хăварса.

Ĕненмесен, мăнукăм,
Йĕлтĕр тăхăнар тупса.
Питĕ лăпкă паян кун,
Йĕрсем пăхар-ха тухса.

## ЮРАТРĂМ ЭП...

Юратрăм эп çанталăка
Черчен çеçке çурсан çăка,
Хĕвел шевли йăмăхтарса
Кÿлле ÿксен хĕм хăварса,
Юратрăм эп çанталăка.

Юратрăм эп сар пикене
Ун хÿхĕм, йăрăс кевтине,
Тур панă ман пепкесене
Сăпка юрри ĕнĕрлесен.
Юратрăм эп сар пикене.

Юратрăм эп ачамсене-
Хĕрĕме, ик ывăлăма.
Ÿссе çитĕнме вĕсене
Парса пĕтĕмпех халăма-
Юратрăм эп ачамсене.

Юратрăм эп мăнукăма-
Йăхри черчен хунавăма.
Телейлĕ, ăслă пул тесе,
Патвар ÿсмешкĕн пиллесе.
Юратрăм эп мăнукăма.

* * *

Сисмерӗм, пӗлмерӗм кӗркуние ҫитнине,
Ӑнкартӑм кӑвар пек ҫулҫӑ ялкӑшсан.
Туймарӑм, шанмарӑм яш вӑхӑт иртнине,
Куляштӑм савнин пит хутламне курсан.

## Ик-тӑват йӗрке.

## ПАЯН КУН

Ӑспа пуян – чухӑн хушшинче,
Хӑй чухӑн-пуян шутӗнче.

## ӐШӐ СӐМАХ

Ҫурхи Хӗвел – ешӗлпе витет.
Ӑшӑ сӑмах – чир-чӗртен чӗртет.

## ТӲРӖ ҪУЛ

Ҫӗр чӑмӑрӗ Хӗвел тавра
Тӳрӗ йӗрпе вӗҫеймест.
Тӑрӑшсан та ҫын пурнӑҫра
Тӳрӗ ҫулпа ҫӳреймест.

## ҪЕРҪИ

Чӗкеҫе ҫерҫи тиркет:
«Килӗшӳсӗр чивлетен,
Ҫӳле-ҫӳле вӗҫетӗн,
Ҫӗмрен евӗр ӳкетӗн»…



## ОЛИГАРХ

Сӑмах парать вӑл суйлавра
Пуян тума халӑхӑма.
Пуйса ҫитсенех хӑй вара
Сутма пуҫлать ҫӗршывӑма.

* * *

Чиркӳре сӑхсӑхать тӑрса Турӑ умне.
Чиркӳрен тухсан вӑрлать халӑх мулне.

## ЭПӖ-ШИМ КУ?

Яш вӑхӑтӑм пулчӗ-ши ман?
Елле тӗлӗк ҫеҫ ирхи?
«Кукаҫей!»-чӗнме пуҫласан:
«Эпӗ-шим ку ? Ак, хайхи!»…

## ӲРКЕНСЕН

Ӳркев киле пуҫласан -
Пушӑ тытап аллӑма,
Ҫапкаласа ҫурӑмран -
Хӑвалап ҫав туйӑма.

# ĂРУ СЛОВАРĔ

Мăнук пĕлесшĕн манран
«Килĕ», «шĕшлĕ»-мĕскерне.
Тĕпчерĕм, эп, мăнукран –
«Принтер», «курсор»-мĕн иккен.

# ШĂЛАН ÇЫРЛИ

Шăлан çырли татасшăнччĕ,
Йĕппи алла тирĕнчĕ.
Пуян хĕре илесшĕнччĕ,
Эп чухăнран – сивĕнчĕ.

# ТУРĂ ÇЫРНИ

Çут çанталăкри хунав –
Турă çырнă хайлав.

# МА-ШИ ХАМАН ЮН ЮХАТЬ?

Пур çыннăн та Çĕр çинче
Пĕр-пек хĕрлĕ юн пулать.
Тĕрлĕ чĕлхе хушшинче
Ма-ши хаман юн юхать?



# АХРĂМ

## ПРОЗĂЛЛА СĂВĂ

Эпĕ ача чухне Çырлаллă утар вăрманĕнче асамлă витлекен пурăнатчĕ. Хам курман ăна, анчах унпа пĕрре мар калаçнă. Эпĕ эй! тесен «эй», кай! тесен, «ай» тетчĕ мана хирĕç.

Чатра енчи хирте вара ун пекки çукчĕ. Мĕнле хытă кăшкăрсан та хирĕç витлесе сас паракан пулман.

- Ку вăл ахрăм,- тетчĕç аслисем.

Анчах мĕншĕн-ха вăл вăрманта пур, уйра-хирте çук? Çакăн пирки пĕрре кукамайран та ыйтнăччĕ.

- Турă çапла хушнă пуль,- тавăрчĕ вăл кĕскен.

Ӳссе çитсен ахрăм мĕн пулнине пĕтĕмпех тĕпчесе пĕлтĕм. Анчах юрату текен туйăмăн та ахрăмĕ пуррине ăнланса çитеймерĕм.

Кăвак куçлă, тур паллиллĕ пикене чун-чĕререн юратрăм. Ăшчике пушар хыпса илчĕ. Çак çулăм хĕрӳлĕхне тусăмсем те сиерĕç пулмалла. Анчах та пике, ман çине шăтарасла пăхсанта, ăшра вут çуннине туймарĕ те, пĕлмерĕ те. «Эп сана ю-ра-та-тăп!» тесе кăшкăрсан та ахрăм пулмарĕ.

Вăхăт малаллах шурĕ. Шалти пушартан кĕл çеç юлчĕ. Кĕтментуман çĕртен хайхи кăвак куçлă, тур паллиллĕ пикене тепре тĕл пултăм. Яш вăхăта аса илсе ăшшăн-ăшшăн калаçса ларнă вăхăтра пикен тарăн куçĕсенче юрату хĕлхемĕ ялкăшса илнине курах кайрăм. Яка чул çинче шăнкăртатса юхакан шыв евĕр калаçса ларакан хĕр сассине тимлĕн итлерĕм.

«Эп са-на ю-ра-та-тăп!» тесе кăшкăрнин ахрăмне те питĕ уçăмлăн илтрĕм. Кăмăлăм çĕкленчĕ, сăвă хайлама хавхалану капланчĕ.

Чĕнтĕр евĕр çулçă сарчĕ
Пилешĕм хитрен-хитрен.
Юрату тинех сас пачĕ
Ахрăм пулса инçетрен.

# МЕРЧЕН ЙĂЛТĂРККИ.

*(Пирвайхи калав.Урал сасси№20 2004ç.)*
*Конкурс: «Асра юлнă тĕл пулу»*

Ластăркка хурăн çулçисем тăрăх çурхи çумăрăн пинпин тумламĕ юхса анать.Акă икĕ-виçĕ тумламĕ,чарăнсарах тăрса,мерчен шăрçи евĕр йăлтăртатса илчĕç те,хăйсен илемĕпе кăмăла çĕклесе ячĕç.Пурнăçра та асра юлнă мерчен евĕрлĕ тĕл пулусем пулаççĕ çав.

Çурла уйăхĕн вĕçĕнче Çтерлĕ пединститутĕн пусма картлашкисем тăрăх анса пынă чухне хĕрсен ушкăнĕ витĕр тухма тиврĕ.Пикесем ректор патне кĕме черете тăнă-мĕн,сумкисем те ав урайĕнче çумăнах тăраççĕ.Кусем абитуриентсем тата пулас литфаксем ĕнтĕ.Физмат уйрăмĕнче çулталăк вĕрентĕм пулсан та çакăн чухлĕ хĕр курманччĕ-ха.Акă пушкăрт чиперккисем хушшинче сарă пике куç умне лекех кайрĕ! Яштак пÿллĕ,сăпайлă хĕрĕн кивĕ те пысăк,кĕл тĕслĕрех чăматанĕ те мана уйрăмах курăнса тăнăн туйăнать. «Ку ман пекех чухăн чăваш пики пулмалла.Хĕр илемĕ куçăма тирĕнчĕ.Чăн-чăн Нарспи пекех вара хăй»,-тесе шухăшласа,куç хывса иртрĕм.Шкулта вĕреннĕ чухнех вуланă «Нарспи» позмăн йĕркисем аса килчĕç:

…Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле качча юратмĕ?...

Маншăн иккĕмĕш вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ.Акă хĕллехи сесси те çитрĕ.Экзаменсене хатĕрленме тесе институтăн вулав залне кайрăм.Библиотекарьтен кирлĕ кĕнекесем илтĕм те пуш вырăн



тупса вырнаçса лартăм. Нумай та вăхăт иртмерĕ ман ума пĕр хĕр-упраç пырса тăчĕ.

- Это мое место, - пĕлтерет хайхи.Пуçа çĕклесе пăхрăм кăна, леш «Нарспи» тăрать мĕн.

- Было ваше,стало наше,- персе ятăм хĕре хирĕç. – Кам шырать,çав тупать,- хушса хутăм чăвашла.

- Кызганыска каршы,мин хеззен англамайым,- тĕп пушкăртла хуравларĕ те маттуркаç, сĕтел çинчен манăн поршеньлĕ авторучкăна йăпăр-япăр аллине тытса:

- Было ваше,стало наше,- тесе куçран çухалчĕ.

…Çеçен хир. Шăрăх. Çурла уйăхĕн вĕçĕ. Çĕленкалтасем,скорпионсем хăйăр ăшне,чулсем хушшине пытаннă. «Бухара-Урал» газ магистралĕ иртерне çĕрте эпир, студентсем, рабочисемпе пĕрле ĕçлетпĕр. Канмалли кунсенче студентсен вакунĕсем пуш-пушах: пурте машинăпа аякра вырнаçнă кÿлĕ хĕрне шыва кĕме кайнă… Ман чĕрçи çинче – сарă пике. Унăн тулли, пиçĕ кăкăрĕсем куçа илĕртеççĕ, пуçа çавăраççĕ. Эпир иксĕмĕр те арлă-арăмлă пурнăçпа пурăнма васкатпăр…

Поршеньлĕ авторучка вара кĕл тĕслĕрех кивĕ те пысăк чемоданрах выртать. Ăна, шăпа пÿрнипе-и е Турă çырнипе-и, ÿсее çитĕннĕ хĕрĕмпе йĕкĕреш ывăлăмсем те курчĕç.

# ХŸРЕЛЛĔ ÇĂЛТĂР

*Пулни-иртни*

Вăл çулхине çуркунне комета Хейла-Боппа вĕçсе килнĕччĕ. Ун çинчен телевизорпа та каларĕç, хаçатсем те çырчĕç. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, вăл икĕ пин çултан пĕрре хĕвел çывăхне килсе каять иккен. Тепĕр кунхине физика урокĕнче ачасемпе кометăсем çинчен калаçма пуçласан, пĕр вĕренекен тăчĕ те: «Тепĕр виçĕ çултан 2000-мĕш çул пулать. Ун чухне тĕнче пĕтет. Манăн кукамай чиркĕве çÿрет, вăл та çапла калать. Комета шăпах тĕнчене пĕтерме килет», - терĕ.

Эпĕ урок тăршшĕпех тĕнче мĕнле пулса кайни, хĕвелпе çĕр чăмăрĕ тата ытти планетăсем пĕр-пĕрипе туртăнса тăни çинчен калаçрăм. Хĕвел туртнăран кометăсем ун патне килсе çÿрени çинчен ăнлантартăм. Уяр каçсенче кометăн хÿрине ÿкерсе илме пулнине те палăртрăм. Чăн та, хĕвел патне çывхарнă май унăн хÿри тăсăлать, каялла кайнă чух тăршшĕ те кĕскелет, çутти те кимет.

Çу иртсен, çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçлансан хайхи вĕренекен урока республикăра тухса тăракан пĕр хаçата илсе килчĕ. Унта пирĕн поселокра пурăнакан пĕр карчăк патне Турă е НЛО ÿкерчĕкпе çыру хăварни çинчен çырнă. Ÿкерчĕкĕнче çĕр чăмăрĕпе хÿреллĕ çăлтăра уйăрма пулать. Çыруне вара вуласа пулмасть.

Уроксем хыççăн хайхи карчăк патне кайма уйларăм. Анчах вăл килте пулмарĕ, чиркÿре-мĕн. Хĕрĕпе кĕрÿшĕ каланă тăрăх, çак пăтăрмах хыççăн кинемей килĕнче пурăнма килĕшмен иккен.



Ÿкерчĕкĕн калăпăшне альбом листипе танлаштарма пулать. Ăна урай сăррине пăсмасăр çинçе кăна йĕрсемпе пустарса çырнă. Таса хут илтĕм те ÿкерчĕк çине хурса кăрандашпа йĕрсем тăрăх çÿретрĕм. «Тÿперен янă çыру» хаçатри пекех пулса тухрĕ.

Пĕрер эрне иртсен эпĕ ÿкерчĕке татах кайса курма шут тытрăм. Хваттере кĕрсенех карчăкăн кĕрÿшĕ мана кăрлă-кăрлă ÿкерчĕклĕ грелка тыттарчĕ. Ÿкерчĕк çинче пĕрремĕш спутникпе çĕр чăмăрне лайăх уйăрма пулать.

Карчăк каçран ура ăшăтма грелка хурса выртнă иккен. Çывăрса кайсан ыйхă тĕлĕшпе ăна тапса сирпĕтнĕ. Тин çеç сăрланă урай сăррине çемçетсе ăшă грелка ÿкерчĕк пичетленĕ. Ват çын çĕрле вăранса каять те грелкине ваннăйне кайса хурать. Ирпе çывăрса тăрсан çыруллă ÿкерчĕке курса сăхсăха-сăхсăха кил йышне ура çине тăрататать.Канма килнĕ кÿршĕ хĕрĕ, журналистка, вăхăта сая ямасăр пулни-иртни çинчен хаçата çырса ярать. Халап çапла республикипех саланать.

Икĕ пинмĕш çул та иртсе кайрĕ, тĕнче пĕтмерĕ, пурăнатпăрха. Манăн вĕренекенсем те тăван шкулпа сывпуллашрĕç. Хайхи «тĕнче пĕтет» текен ача халĕ Санкт-Петербургри Космос физикин аслă Академийĕнче ăс пухать. Чылайăшĕ авиаци тĕлĕшĕпе институтсене вĕренме кĕчĕç. Хамăр хулара вертолет тунă çĕрте ĕçлекенсем те пур. Хÿреллĕ çăлтăрсене Турă тĕнчене пĕтерме мар, пунăçра çĕнĕ аталанупа пурăнма хушса ярать пулĕ. Ахальтен мар хăш-пĕр тĕпчевçĕсем çĕр çинчи пурнăç пуçламăшне, углеродлă молекулăсене, кометăсем илсе килнĕ тесе шутлаççĕ.

# ГИПНОЗ

Сынран тухакан гипноз вăй-хăватне эпĕ туйса курман, анчах çут çанталăкра гипноз евĕр вăй пуррине лайăх пĕлетĕп.

Çу вăхăтĕнче мана хамăр республикăри Зианчура тăрăхĕнчи сим пылпа пиçнĕ çырла шăрщиллĕ сывлăшлă тусем, куççуль пек тăрă шывлă Сурень авăрĕсем илĕртеççĕ. Шыв хĕрринче вăлтапа ларнă чух хама çăтмахри пек туятăп. Таврара кайăксем тĕрлĕ сасăпа юрлаççĕ, авăрта йăлтăр-ялтăр пулăсем ярăнса ишеççĕ. Ку самантсенче эпĕ – тарăн гипнозра.

Çтерлĕрен Зианчурана автобуссем ирех каяççĕ. Çавăнпа хулана маларах çитсе Ваççук куккасем патĕнче çĕр каçатăп. Çав вăхăтра çÿç кастарма та, «Пулăçă» лавккине кĕме те май пур.

Ку хутĕнче хулана çитсенех, шăрăхран хăтăлас шутпа, Ваççук куккапа бара сăра ĕçме кĕрсе лартăмăр. Кунта сулхăн, çын та нумай мар. Пире хирĕç, аякри кĕтесре, сар пике пĕччен ларнине асăрхарăмăр.

Темшĕн-тĕр кукка гипноз çинчен сăмах пуçарчĕ.

- Пĕлетĕн-и, пирĕн мăн асатте, Хура Иван, гипнозлама пултарнă теççĕ. Урампа аялти пусса шыв ăсма каякан хĕрарăмсене каялла килĕсене пуш витрепех «çавăрса» янипе пулнă, тет. Кантăкран пăхса ĕнтĕ.

- Халап пуль ку, - шанмарăм эпĕ.

- Кашни халапра тĕрĕслĕх тĕшши пур. Гипноз тума пĕлни ăруран ăрăва куçать иккен.

Эпир санпа – виççĕмĕш сыпăкрисем. Çав генсем сана та, мана та лекме пултарнă. Ăна халех тĕрĕслесе пăхатпăр. Эсĕ манран икĕ çул çамрăкрах, çавăнпа сана çул паратăп. Кĕтесре пĕччен ларакан пикене ăсунта хушу пар: пирĕн сĕтел хушшине



килсе лартăр. Хĕр çине тимлĕ пăхма тăрăш. Шухăшунта ăна юратса хĕрÿллĕн ытала, - вĕрентрĕ мана кукка.

- Манран чылай çамрăк курăнать-çке, эп – хĕрĕхре, вăл çирĕм тултарнă-ши хăть? – пăхса илтĕм эп хĕр упраç çине.

- Юратура ÿсĕм çук, - кĕскен татса хучĕ кукка.

Пикене куçсемпе пăралама пуçларăм. Çакна вăл асăрхарĕ пулас. Ман çине йăпăрт пăхса илчĕ: вăлтан хулккине пулă турт-са илнĕ пекех туйăнчĕ. Пĕлетĕп, пысăк пулă тытас тесен васкама кирлĕ мар. Хулккине тепĕр хут туртассине кĕтес пулать. Çапла эпир пике çине çур сехете яхăн гипноз хумĕсем ярса лартăмăр. Вăл вара вырăнтан та хускалмарĕ.

Бартан тухса урампа утма кăна пуçланăччĕ, хайхи пике пире хăваласа çитрĕ. Тÿрех ман ума тухса тăчĕ те евĕклĕ пăхса сигарет ыйтрĕ. Эпир пирус туртманнине пĕлсен тиркевлĕн:

- Ма васкатăр? Ман çине тимлĕ пăхрăн, кăмăлу пулсан пыратăп, - терĕ.

Калаçнă май уиран ĕçнĕ шăршă килнине туйрăм. Туртакан, ĕçекен пикесене хулăпа ăшалантарса илес килет хăш чухне.

- Мана эс питĕ килĕшрĕн, анчах автобуса васкамалла, - лăпкăн калаçма тăрăшрăм уппа.

- Апла пулсан сăра ĕçме «полтинник» пар, - хăюллăн ыйтрĕ хайхискер.

Хам айăплине туйса хĕрĕн ывăçĕ çине аллă тенкĕлĕх хут укçа хутăм. Куккан тутисем кулăпа хыçалти катăк шăл курăнмаллах уçăлчĕç:

- Ку – гипнозăн «тухăçĕ», - терĕ вăл айăккинче тăнă çĕртен.

Хула хĕрринчи тăхăр хутлă çĕнĕ çурт тĕлне çитсен, Ваççука килне кĕме хушса, урам урлă вырнаçнă парикмахерскине

кётём. Ӳсе кайнă çÿçе кёскетме ыйтса тёкёр умёнчи кресло çине вырнаçрăм. Çап-çамрăк мастер Гульнара ятлă иккен. Ячĕ «чечек» тенине пĕлтерет, хăй те ирхи сывлăмпа пĕрле çурăлнă çеçке евĕр. Парикмахер ĕçне пуçласан хама пикен ытамне кёрсе ўкнĕ пекех туйрăм. Тёкёр витёр унăн чие евёр тутине, çӳхе кёпе айёнчи тулли те пиçĕ кăкрисене пăхса килентём.

«Паян пёрремёш гипноз ăнăçсăр пулчĕ, ун вăй-хăватне тепре тёрёслесе пăхас мар-ши?» - çуралчĕ пуçра шухăш. «Пикеçĕм! Тёкёр витёр пулсан та куçран пăхса ил-ха», - ăсра хушу яма пуçларăм эпĕ.

Çак самантра хăлха тăрри пĕçерсе илчĕ. Гульнарăн аллинчи хаччи урайне персе ўкрĕ:

- Эй, Турăçăм! Каçарăр! Тархасшăн, каçарăр! – хыпаланса ўкрĕ вăл.

Хăлхаран юн тумлать. Хĕр хачă вĕçĕпе ăнсăртран хăлха тирне касса янă иккен. Эпĕ ăнлантăм. Паян хĕрсем çине гипноз хумĕсем яни, хамăн çине сиен йыхăрни пулчĕ.

Куккасем патне çитсен Хура Иван гипноз генĕсем çинчен калаçу малалла тăсăлчĕ…



# НАМĂС

Хальхи çамрăк пикесем урам тăрăх пĕр аллипе ача лартнă коляскипе тĕртсе, теприншпе пирус мăкăрлантарса пыни тĕлĕнтерет. Çав вăхăтрах кӳрентерет те. Намăс тени пирĕн ĕмĕрте çухалса пырать-шим?

Этимологине тĕпчесен «Намăс» сăмах сĕм авалтан ытти халăх чĕлхинче те пулни палăрать. Çĕнĕ эрă пуличченех авалхи грексен чĕлхинче – «Номос», курдсен – «Намус», пушкăртсен – «Намыç» сăмахăн пĕлтерĕшĕ – «закон» е «çырман саккун» тенипе танлашнă.

Мăн асаттесен авалхи «намăс» саккунĕпе эпĕ ултăри ача чухнех паллашрăм, намăслăх туйăмĕ ĕмĕрлĕхе асра юлчĕ.

. . . Арман пĕвине шыва кĕме каяс умĕн эпир, ачасем, кĕпер патĕнчи тимĕрçĕ лаççи умĕнче пуçтарăнаттăмăр. Унта Пракка пичче тимĕре хĕртсе, вăйлă аллипе пысăк мăлатука тетте пек вылятса лаша таканĕ тунине пăхса тăраттăмăр.

Аслă класра вĕренекен Маттюк Мишши килсе тухсан кĕпер карлăкĕ(перила) тăрăх утса-чупса кăтартатчĕ. Паян тимĕрçĕ лаççи умĕнче, манпа пĕр çултисенчен, Леньăпа Петя кăна курăнчĕç.

Эпир, Маттюк Мишшинчен тĕслĕх илсе, кĕпер карлăкĕ çине улăхса пăхма шутларăмăр. Аничах аялалла пăхсан питĕ çӳллĕ те хăрушă иккен. Ӳкес пулсан пиртен «икерчĕ» пулать тесе, кĕпер карлăкне ыталаса выртса, аврти парттас пулăсем ярăнса ишнине сăнама пуçларăмăр. Шыв çине куçа илмесĕр вăрах пăхсан кĕперпе пĕрле юхăма хирĕç шунă пекех туйăнать. Çак вăхăтра икĕ майра кĕпер урлă каçса пынă иккен. Вĕсем çирĕп сасăпа вырăсла тем каласан Леньăпа Петя: «майра-кайра,

майра-кайра…» - витлесе кĕпер айнелле чупрĕç.

Аннен йăмăкĕ Укçине аппа, учитель пулса ĕçлекенскер, мана вырăсла пĕртен-пĕр сăмах –«здрасьте» вĕрентнĕччĕ. Эпĕ карлăк çинчен антăм та: «здрасьте», - тесе персе ятăм.

Майрасем, кăмăлĕсем çемçелнĕрен-ши, тем каласа мана мухтарĕç пулас. Пĕри сумкинчен шур кулачă кăларса тыттарчĕ. Ун пек пĕчĕк шурă кулачă эпĕ, кукамайпа хăмла çырли сутма кайсан, хулара курнăччĕ.

«Вырăсла пĕлсен кулачă та çиетĕн», - тесе мухтанас шухăшпа тусăмсене куçпа шырама пуçларăм.

Кĕпер урлă каççанах колхозăн çимĕç пахчи сарăлса выртатчĕ. Унта помидор, хăяр, купăста тата ытти çимĕç ÿсетчĕ. Пиçнĕ хĕрлĕ помидорсем кĕпер çинчен пит илĕртÿллĕн курăнатчĕç. Выльăх кĕмессе пахчана вĕрлĕкпе карталанăччĕ. Маттюк мучи хуралçăн хÿшши пахча варринче, кĕпертен аякра мар, ларатчĕ.

Çырма хĕррипе кайса, пахчана çыран енчи карта айĕнчен хырăмпа шуса кĕрсен, хуралçă курмасть. Акă, Петьăпа Ленька пахчари йăран тăрăх упаленеççĕ. Вĕсем пиçнĕ помидорсене хĕвĕсене тултарчĕç те çырма хĕррипе ÿсекен хăва тĕмĕсем хушшинче çухалчĕç.

Кулач татăкне çисе пĕтерсен манăн та «помидор» операцине пурнăçлас шухăш çуралчĕ. Çырма хĕррине анса, ачасен йĕрĕпе, карта айĕнчен хырăмпа шуса кĕтĕм те леш йăран çине лекрĕм.

Шăлаварăн икĕ кĕсйине пĕрер помидор шăнăçрĕ, виççĕмĕшне хĕве янă кăначчĕ, арçын сасси мана ура çине тăратрĕ. Туймăрзă Михайли пахчаçă пулчĕ иккен.

- Намăс мар-и сана? Халех ял Канашне тытса каятăп та



председателе каласа кăтартатăп, - тесе алăран тытрĕ те çавăтса кайрĕ.

Урам тăрăх утнă чухне мана питĕрех намăс туйăнчĕ, çĕр тĕпне анса каяс килчĕ. Ман телее, пĕр çын та хирĕç пулмарĕ.

Ку пулăма кукамай пĕлес пулсан – эпĕ пăшăрханмастăп. Вăл хулăпа пĕçертсе илет те иртет. Макăрма пуçласан:

- Ан нăйкăш, арçын пул, - тет.

Карьерта ĕçлекен аннен хăлхине кĕрсен, пĕлетĕп, вăл шăппăн йĕме пуçлать. Атте сарăмсăр вилнĕ хыççăн аннен куçĕсем час-часах куççульпе тулаççĕ. Çавăнпа пăшăрхантарас килмест.

Ял Канаш çурчĕ умне çитсен, мана урамра кĕтсе тăма хушса, пахчаçă шала кĕрсе çухалчĕ. Эпĕ вăрахчен тăтăм, анчах пÿртрен тухакан пулмарĕ. Хĕве чикнĕ помидора хăвăрт çисе пĕтертĕм те пĕве хĕрринелле чупрăм.

Тепĕр кунхине ачасемпе кĕпер патĕнче выляса çÿренĕ чухне мана хуралçă Маттюк мучи чĕнсе илчĕ. Малтан вăл карта таврашĕнчи пăрусене улăхалла хăвалама хушрĕ, унтан хÿшши патне пахчана кĕртсе хĕве помидор тултарчĕ, килте кукамая пама хушрĕ. Çавăн хыççăн пăрусене, хурсене карта çывăхĕнчен хăвалама кашни кун çÿрерĕм. Каярахпа киле пиçнĕ арбуз та илсе килтĕм. Мана тытса ял Канашне илсе кайнине килте никам та пĕлмерĕ.

Нумай-нумай çул иртсен, Маттюк мучипе Михайла пахчаçă пурнăçран уйрăлнине илтсен, шухăша кайрăм. Вĕсем çапла мана ăса кĕртнине ăнланса илтĕм.

# ЧӐЛХЕРИ САСӐСЕМ

Тĕлĕнмелли çанталăкра нумай. Çавсенчен пĕри – сасă. Сĕрме купăс сасси те, калаçури сасă та хĕлĕх чĕтреннипе пулать. Чĕлхе хĕлĕхĕ чĕтренсе çăвар хăвăлĕнче резонанс пулăмĕ хыççăн сывлăшра сасă хумĕсем саланаçĕ. Çав хумсем хăлха хăвăлне кĕрсен çеç эпир сасса илтетпĕр. Тĕлĕнмелли ку марха.

Пасарти суту-илӳ шăв-шавĕнче, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăх хушшинче, чăвашла калаçакансем пулсан, ку тăван чĕлхе уçăмлăн илтĕнет. Пĕлĕше, тĕттĕм çĕрте, хăйне курмасан та, сассинчен паллама пулать. Ӳсе çитнĕ ывăлĕ ашшĕн сассипе калаçнине те пĕрре мар асăрханă. Кăсăк мар-и вара çакă? Темиçе пин çул каялла çырса хăварнă сăмахсене саспа вуласан вĕсем чăвашла пулни уйрăмах тĕлĕнтерет.

«Всемирная история» (Мускав, 2003 ç.) энциклопединче сас паллилĕ çырупа чи малтан Месопотаминчи шумерсем ултă пин çул каярах усă курма пуçланине пĕлтернĕ. Америка археологĕсем вĕсен тăм таблицисене тупнă, унта математика, медицина, тĕрлĕ миф тексчĕсем пулнине тĕпчесе пĕлнĕ. Çавсен хушшинче Урук хулин правителĕ Гильгамеш çинчен çырнă эпос та пур.

- «Хозяйка богов» Сидури помогвет Гильгамешу найти карабельщика Уршанби…- тенĕ унта.

Тĕлĕнмелли сăмах кунта – СИДУРИ. Унпа шумерсем темиçе пин çул ĕлĕк-авал усă курнă. Хальхи вăхăтра тăм таблицăсене акăлчанла вуланă, кĕнеке çине вырăсла çырнă. Çав хушăра мĕн чуль улшăну пулма пултарнă?!

Фонетика саккунĕсене тишкерсен кирек мĕнле чĕлхен те



хăйне майлă сасăсемпе сасă майлашăвĕсем пуррине асăрхатăн. Чĕлхере усă куракан сасăсем тытăм(звуковой строй) йĕркелеççĕ. Çав тытăма тăван чĕлхепе калаçакансем чун-чĕрепе туяççĕ. Çавăнпа пуплеври вĕсемпе кăна усă кураççĕ, ют чĕлхери сасăсемпе пăтраштармаççĕ.

СИДУРИ сăмаха чăвашлатса вуласан ÇИЛ ТУРРИ пулать.

Шумерсен историне тимлĕн тишкерсен чылай чăваш сăмахĕпе тĕл пулатăн. Ахальтен мар иккен иртнĕ ĕмĕртех Америка Пĕрлешӳллĕ Штачĕсен университечĕ студентсене чăваш чĕлхине вĕрентнĕ. Пирĕн чĕлхе çине таянса Шумер тăрăхĕнчи халăхсен çыру палăкĕсене вулаççĕ, этемлĕхĕн авалхи аталанăвне тĕпчеççĕ.

# ШУМЕРСЕН ТУРРИСЕМ

Куҫа курӑнакан тӗнчене – макротӗнчене – пире курӑнман вӑй – гравитаци – тытса тӑрать. Гравитаци уҫлӑхӗнче пӗр массӑна тепӗр пысӑкрах масса туртса илмессе пӗр тӗрлӗ хӑвӑртлӑхпа куҫмалла.

Хӗвел хӑйӗн йывӑрӑшӗпе Ҫӗр чӑмӑрӗнчен 330000 хут, ытти пӗтӗм планетӑран 750 хут пысӑкрах. Ҫавӑнпа планетӑсем Хӗвел тавра, пӗр лаптӑкра – эклиптика лаптӑкӗнче – тӗрлӗ хӑвӑртлӑхпа темиҫе миллиард ҫул ҫаврӑнаҫҫӗ.

Хӗвеле чи ҫывӑххи – Меркурий, унтан – Венера, виҫҫӗмӗш планета – пирӗн Ҫӗр чӑмӑрӗ. Вӑл космосра ҫеккунтне вӑтӑр ҫухрӑм(30км:с) хӑвӑртлӑхпа куҫса, ҫулталӑк хушшинче Хӗвел тавра пӗрре ҫаврӑнать. Меркурипе Венерӑна шалти планетӑсем теҫҫӗ. Хӗвеле ҫывӑх пулнӑран, вӗсене хӗвел айккинче – элонгацинче – хӗвел ансан кӗске вӑхӑтра ҫеҫ куратӑн. Тепӗр элонгацинче, хӗвел тухӑҫӗнче, хӗвел тухас умӗн курӑнаҫҫӗ.

Ҫӗрле ку планетӑсене ҫӑлтӑрсем хушшинче шырани усси ҫук.

Меркурие, Хӗвеле ҫывӑх пирки, лайӑх курса пулмасть. Венера – чи ялтӑркка планета, унтан ҫутӑрах ҫӑлтӑр каҫхи тӳпере урӑх ҫук. Ахальтен мар авалхи Месопотамире ӑна шумерсем Иштар тенӗ. Ҫаплах Юрату Турри, Пулӑхлӑх Турри тата Турӑ Амӑшӗ тесе шутланӑ.

Ҫӗрлехи ҫӑлтӑрсенчен чи ҫутти, чи ялтӑркки – Юпитер. Ӑна шумерсем Мардук Турӑ – Ҫӗр чӑмӑрне сыхлакан Турӑ – тенӗ. Вӑл Хӗвелӗн ывӑлӗ пулнӑ. Мӗншӗн-ха шумерсен Мардук Турӑ пулнине астрономсем халь тин ӑнланнӑ?

Юпитер Ҫӗр массинчен 318 хут пысӑкрах, ҫавӑнпа аякри





космосран вӗҫсе килекен астероидсене, кометӑсене туртса илсе Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫине вӗҫме памасть.

Ҫӗр чӑмӑрӗ Хӗвел тавра пӗччен мар, Уйӑхпа пӗрле ҫаврӑнать. Уйӑх Ҫӗр спутникӗ пулса ҫеккунтра пӗр ҫухрӑм(1км:с) хӑвӑртлӑхпа куҫать. Вӑл 29,5 талӑкра Ҫӗр тавра пӗрре ҫаврӑнать те тӑватӑ фазӑра пулса курӑнать: ӳсекен ҫурла Уйӑх, тулли Уйӑх, пӗчӗкленекен ҫурла Уйӑх, ҫӗнӗ Уйӑх. Ҫавна шута илнӗ шумерсен пӗр уйӑхра тӑватӑ эрне пулнӑ.

Уйӑх, эклиптика лаптӑкӗнче тенӗ пекех ҫаврӑннӑ пирки, уйӑхра пӗрре Венера ҫумӗнчен иртнӗн курӑнать. Ку пулӑма шумерсем Нанна Турӑ Иштар Турӑпа пӗрлешет тенӗ. Хӗрарӑмӑн

уйăх хушши(менструацийĕ) те 29 талăкран пуçланнине Нанна Турă хушнипе тесе ăнланнă.

Тулли уйăхра ÿсен-тăран лайăхрах, хăвăртрах ÿснине асăрханă шумерсем.

Мĕнпур Турăран чи асли Хĕвел пулнă. Ăна шумерсем Уту е Ата Турă тенĕ. Виçĕ Турă – Ата, Нанна, Иштар – чĕр-чунсене, ÿсен-тăрана хăйсен хăвачĕпе аталантараççĕ, ÿстереççĕ тесе шутланă. Чикĕ хĕрне лартакан чул юпасем çине Хĕвеле, Çурла Уйăха тата Иштар çăлтăра ÿкернĕ.

Христианство тĕнĕнче хальхи хăш-пĕр чиркÿ тăрринчи хĕрес çинче виçĕ Турра – Хĕвеле, Çурла Уйăха тата Иштар(пĕчĕк шар) çăлтăра куратăн.





Мĕн пур планетăсем эклиптика лаптăкĕнче çаврăннă пирки сайра вăхăтра Юпитер, Венера Уйăхпа пĕрлешнĕ пек пире курăнать. Ку çутçанталăк пулăмне шумерсем, хăйсен астрологи календарĕнче, кĕлĕ тумалли вăхăт тесе палăртнă. Паян кун мечетсен тăрринче символ – икĕ шарпа çурла уйăх, курма пулать. Вĕсем шумерсен Мардук, Иштар, Нанна Туррисем.

Шумерсен çыруне тĕпчекенсем тĕн çинчен çырнă текстсенче «шимту» сăмах тăтăш тĕл пулнине палăртнă, пĕлтерĕшне ăнланса çитеймен.

Чăваш фонетикинче «шим ту» сăмах «кĕл ту» пек илтĕнет.

Н. А. Ашмарин словарĕнче (17-мĕш том ) «Шилĕк ту» сăмаха ăнлантарни пур.

Туй пулас умĕн арçын ачана юланут çине лартса «шилĕк» йыхăрма кăларнă, кил картишĕнче каскасем çине хăмасем хурса тăват кĕтеслĕ «шилĕк» тунă, унта сĕтелсем лартса туй ирттернĕ.

Хĕр сичен пынă халăха ăсатас умĕн «мăн шилек» туса «пÿлемĕк чÿкленĕ», сĕтел умне йывăçран тунă «шилĕк» лартнă. Шумерсенченех килнĕ «шимту» йăли мар-ши ку?

Ăсчахсен тĕпчевĕсене шута илсен, астрономи, математика, çырулăх, чăваш чĕлхи никĕсĕ, тĕн тĕпĕ-тымарĕ шумерсенченех тухнă пулать.

## АркАим

1987 çулта археологсем Сибайран 60 çухрăмра тĕлĕнмелле авалхи хула чавса кăларнă. Челепи(Челябинск) çĕрĕнчи Караганка юхан шывăн икĕ сăрт хушшине пĕвелесе водохранилище тума пуçланă. Шыв юхăмне чарас умĕн, пулас шыв лаптăкне пăхма, «кукурузник» самолетпа вĕççе çаврăннă. Кĕтмен çĕртен пĕвереn аякра мар çап-çавракан лаптăкра çын пурăннă пикĕс вырăнĕсене асăрханă. Археологсем тĕпченĕ хыççăн ку авалхи хула Аркаим пулни палăрнă.

Йывăçран хăпартнă хулана астрономие, математикăна, пăхăр шăратма пĕлекен ăслă çынсем лартнă иккен. Вăл Египет пирамидисенчен те ватăрах. Унти халăх 3800 çул ĕлĕкрех пурăннă.

Ăсчахсен шучĕпе, çав тапхăрта пăхăр шăратма Месопота-







мири шумерсем çеç пĕлнĕ. Шумерсен патшалăхăн палли варринче хĕрес спиральпе вĕçленнĕ. Аркаим символĕ те шумерсенни пекех. Хальхи вăхăтра ăна свастика теççĕ.

П. э. у. 25-23 ĕмĕрсенче Шумерсен патшалăхне аккадсем, семитсем тапăнса тĕпĕ-йĕрĕпе аркатнă. Месопотамире шумерсен çырулăхĕ, чĕлхи çухалнă. П. э. у. 20 ĕмĕрсенче çĕнĕ патшалăх – Вавилон çуралнă.

П. э. у. 18-17 ĕмĕрсенче Урал таврашĕнче шумерсенни пек Аркаим цивилизацийĕ тупăнни – тĕнчери ăсчахсемшĕн чăн-чăн сенсаци.

* * *

Çурла уйăхĕнче Аркаима кайса курма май пулнăшăн питĕ савăнтăм. Пирĕн пек çулçÿревçĕсем куçта нумай иккен. Пĕр çĕрте лашапа утланса çÿреме сĕнеççĕ, тепĕр çĕрте дельтоплан-

па вĕçеççĕ. Ту çинче çынсем кăткăсем пек унталла-кунталла утни курăнать. Суту-илӳ ретĕнче тĕрлĕ сувенир сĕнеççĕ. Аркаим сăмаха кăкшăм сувенирĕ çине чĕрсе икĕ пысăк сас паллипе АркАим тесе çырнă. Мĕншĕн ун пек çырнине ăнлантаракан пулмарĕ. Турлагерьте вырăн тупса палатка лартнă хыççăн эпир те Шаманка тăвĕ çине васкарăмăр. Ун тăррине спираль евĕр сукмакпа хăпармалла иккен. Утнă май хăвна кунта тахçанах пĕрре пулнă пек туйса илетĕн. Çан-çурăм малтан йывăрланать, çӳлерех хăпарсан, çурăм çинчен йывăр михĕ пушаннă пек, çăмăлланать. Çапла асамлă сăрт вăл.

Каçхи çăлтăрсем хура чаршава шăтарса çутă пайăркисем сапаççĕ. Палатка умĕнчи кăвайт хĕлхемĕ вут-кăварпа вылять. Сăмсана шашлăкăн техĕмлĕ шăрши кăтăклать, аякра мар çăмăл кĕвĕ илтĕнет. Хытă шавлакансем, йĕркене пăсакансем çук. Тĕпсĕр тӳпене пăхсан тарăн шухăша путатăн.Темиçе пин çул





ĕлĕк-авал, эпир куракан çăлтăрсенех курса, пирĕн пекех чĕртнĕ кăвайт умĕнче ларса, аркаим çыннисем мĕн çинчен калаçнăши? Мĕнле чĕлхе вĕсен хушшинче пулнă-ши?

Ирхи тăхăр сехетелле турбаза лаптăкĕнче экскурсие каймалла пухăнтăмăр. Аркаим никĕсне курма каякансен ушкăнне çамрăк студентка Аня ертсе пычĕ. Сăпайлă хĕр Аркаим çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Караганка айлăмĕнче çаврака лаптăкри хулана астрономире эклиптика координачĕсене, геометрие пĕлекен ăстасем тунă. Хальхи вăхăтра Челепи çĕрĕнче Аркаим евĕр тата 21 хула тупнă. Çавсем пурте пĕр патшалăха кĕнĕ тесе шутлаççĕ, вĕсен символĕ – свастика. Тĕп хули – Аркаим. Ку патшалăхра чуралăх пулман. Выльăх кĕтĕвĕ пăхакансем, тырпул ӳстерекенсем хула тулашĕнче пурăннă. Хулара – жрецсем, çар çыннисем, ăстаçăсем. Аркаимри халăх вăтамран 35-40 çул çеç пурăннă. Ăсчахсен шучĕпе, руда шăратнă чухне тухакан сиенлĕ газ çын ĕмĕрне кĕскетнĕ. Аркаим крепоçĕнче вăтамран 2500 çын пурăннă.

Хула икĕ çаврака лаптăкран тăнă. Шалта 27 пурăнмалли пӳрт, кашни лаптăкĕ – 110-180 тăв. метр. Тулашра – 45 çурт. Кашни килĕре пусă, канализаци, апат-çимĕç хумалли нӳхрепсем пулнă. Хула тавра 3м тарăнăш, 4м сарлакăш канав чавнă. Тата 4м çӳллĕш йывăç стена хăпартнă. Унта кĕмелли хапха пĕрре пулнă. Вăтамран илсен, çĕр çул пурăннă хыççăн çынсем кунтан темшĕн тухса кайнă, хулана çунтарса янă. Çапăçу йĕрĕсем тупăнман. Пĕр-пĕр эпидемирен тарман-ши текенсем те пур.

* * *

АРКАИМ сăмаха АРИЙ, АРКА сăмахран тенĕ шухăшсене вуланăччĕ-ха. Авторсем сăмахăн пĕрремĕш сыпăкне кăна АРК пайне тĕпченĕ, АИМ сыпăкăн пĕлтерĕшне тупайман. Мĕншĕн тесен тĕпчевçĕсем авалхи славян е тĕрек чĕлхине пикĕсе хурса пĕлтерĕшне шыранă.

Аркаим йĕри-таврашĕнче – сăрт. Сăрт хушшинче, айлăмра, юхан шыв хĕрринче хула вырăнаçнă. Хăш енчен пырсан та, сăрт çине улăхмасăр, вăл курăнмасть. Паянхи чăваш сăрт çине улăхсанах: «Ку хула сăрт аркинче айлăмра ларать вĕт!» - тенĕ пулĕччĕ.

АРКĂ АЙЛĂМĕ – чăвашла тĕп-тĕрĕс калана вырăн.

Вырăс чĕлхинче çурма уçă сасăсем ă, ĕ улăшăнаççĕ е тухса ÿкеççĕ. АРКĂ сăмахран АРК юлать, АЙЛĂМĕ сăмахран АИМ илтĕнет, мĕншĕн тесен АЙЛĂМ сăмахăн пĕлтерĕшĕ ытти чĕлхере çук. Икĕ юлнă сăмаха пĕрлештерсе вырăсла çырсан АркАим пулать, кăкшăм сувенир çине çырнă пекех.

ЧĂВАШ чĕлхин тымарĕ упраннă, анчах питĕ тарăн выртать иккен!

## СĂМАХ ТĔШШИ

Пушкăрт патшалăх университетĕнчи археологи кафедрин заведующийĕ

Н. А. Мажитов пĕррехинче телекурăмра çакăн пек каланăччĕ: «Кивĕ Уфара, строительсем чавнă çĕрте, студент-археологсем авалхи ăру пурăннă вырăна тупрĕç. Унта пин çул каярахри япаласем упраннине тишкерчĕç. Тахçан ку вырăна тĕрекле «УПА» тенĕ. Акă ăçта УФА сăмахăн тарăн пытарăннă тĕшши!



Уфимкăпа Шурă Атăл пĕрлешнĕ вырăнтан пуçласа Телецентра çитиччен сăртлă вырăна аякран асăрхатăн. Унти çÿллĕ çуртсене ăсра илсе пăрахса, сăртсене, ĕлĕкхи пек, çăра вăрманпа витер-ха. Чăн та, куç умне упа евĕр «çăмлă» сăрт тухса тăрать. Вăл вăхăтра уписем те, вăрманта йышлăн ĕрченĕ.

Кунта, чăвашăн УПА е УПА ТУ сăмахĕ вырăссен УФА сăмахĕпе улшăнни куç кĕрет.

Авалтан килнĕ таврари хăш-пĕр кÿлĕ, ту ячĕсене илсе пăхар.

ЧИПЕРКУЛЬ сăмахра чăвашла ЧИПЕР те хитре кÿлĕ тени уçăмлăн илтĕнет.

Шурă Атăл хĕрринче, Çтерлĕпе Ишимбай тÿремĕнче, ÿкерчĕк çинчи пек илмлĕ тăватă Шихан тăвĕсене куратăн. Вĕсенчен пĕрне авалтан ТОРА-тау тенĕ.

Легендăсенчен çакă паллă: вăл ту çине кĕл тума хăпарнă. Палах, ку чăвашла ТУРĂ тăвĕ сăмахран упранса юлнă.

Рим Ахметовăн «Слово о реках, озерах и травах» (Уфа – 1988г.) кĕнекине вуласа пăхар. «Пушкăртри чи вата, чи пысăк кÿлĕ – Аслыкуль», - тесе çырнă хыççăнах, автор Аслыкуль пушкăрт чĕлхинчи Азыл (усал) сăмахран пулса кайнă-тăр тесе шутлать. Ватă та пысăк кÿлле Азыл ятпа палăртни пĕртте çыхăнмасть. Чăвашла АСЛĂ кÿлĕ тенĕ майăн чи пысăк, чи ватă кÿлĕ пулса тăрать. Тата çавăнтах çак кÿллĕн хуçи ОЛО СУРТАН тесе пĕлтернĕ. Палах, ку чăваш сăмахĕ – УЛА ÇĂРТТАН.

Кандрыкуль çинчен çырнă çĕрте Р. Ахметов КАНДРЫ сăмаха пушкăртсен ХАН ТОРА (хан вырăнĕ) сăмахĕпе улăштарса килĕштерессшĕн.

Ку карти-маси патне те пымасть: Х, К хупă сасăсем нимĕнле те улшăнмаççĕ, мĕншĕн тесен ку сасăсем чăвашра та, вырăсра

та, пушкăртра та пур, илтĕнме те вĕсем пĕр пек илтĕнеççĕ.

КАНДРЫ сăмахра чăваш сăмахĕ КАНТĂР (конопля) пур тесен тĕрĕсрех пулать пуль.

Чăваш чĕлхинче Т хупă шавлă сасăпа ялан янравлă (сонорлă) Н сасă Ă уçă сасă хушшинче тăнă пирки Д пек илтĕнет. Ă, Ы сасăпа улшăнать, çавăнпа та чăвашăн КАНТĂР сăмахĕ вырăсла КАНДРЫ пулса тухать.

Мĕн ĕлĕк-авалтан чăваш кантăр акмасăр пурăнайман. Вăрринчен çу илнĕ, тунисене шыва хурса сӳс тунă, çип авăрласа пир тĕртнĕ. Кантăр хутма пысăк пĕвесемпе кӳлĕсем кирлĕ пулнă, çавăнпа та кантăр хутнă кӳлле КАНТĂР КӳЛЛИ тенĕ. Эппин КАНДРЫКУЛЬ çак сăмахран «çуралнă» темелле.



## ТУПМАЛЛИ. Сăвăсем.


САСПА КАЛАНĂ ШУХĂШĂМ ........ 3
ÇĂТМАХ ........ 5
КИМĔ ЕВĔР ЧӲХЕНЕÇÇĔ ........ 6
ÇУМĂР ........ 7
ÇАВНĂ САМАНТ ........ 8
ÇĔР ЧĂМАРĔ ÇАВРĂНАТЬ ........ 9
ХУРĂН ШЫНĔ ........ 10
ĔМĔТЛЕНЕТĔП КУЛЛЕНЕХ... ........ 11
КĔРХИ КĔВĔ ........ 12
ЫРĂ ÇĂКА ........ 12
ШĂПЧĂК ЮРРИ ........ 13
ТЫМАР ЯРСАН... ........ 14
КАÇХИ ВУЧАХ ........ 15
КĔРЕШ ЮМАН ........ 16
ТЫМАР ........ 17
СĔНУ ........ 22
ШУРĂ ЮМĂÇ – ШУР ЧЕЧЕК ........ 23
ЙĂМРА АЙĔНЧЕ ........ 24
ТИВЛЕТ ĂÇТА? ........ 25
ХĔРЛĔ ПАЛАН ........ 26
ИРХИНЕ ........ 27
ÇУРХИ МУЗА ........ 28
ÇĂЛТĂР ÇУТĂ ÇУНСАН ТА ........ 28
ВИÇĔ ХУРĂН ........ 29
ИНÇЕ ÇУЛА ÇӲРЕМЕ ........ 29
ЮН ВĔРИ ........ 30
ХĔВЕЛ ТУХНĂ ЧУХ ........ 31
ВАТĂ ЙĂМРА ........ 32
ТУНСĂХ ........ 33
МАНА ПӲРНИ ĂÇТА-ШИ? ........ 34
ШУХĂШĂМ ........ 35
ÇĔМĔРТ ÇЕÇКИ ЮР ПЕК КĂПĂШ ........ 35
КУЛĔ ТĔКЕРĔ ........ 36
ÇУРХИ КУН ........ 37
РАÇÇЕЙРА ........ 37
МĔНШĔН КĔРХИ ВĔРЕНЕ ........ 38
УРНĂ ТЕЙĔН – ÇАНТАЛĂК ........ 39
ШУРĂ-ШУРĂ ЮР ӲКЕТ ........ 40
ГИТАРА ........ 41
КĔРХИ КУН СĔМ ВĂРМАНА ........ 42
ХĔЛЛЕ ХĔВЕЛ ЮР ПĔРЧИНЕ ........ 43
ТЕЛЕЙ ........ 44
МĂНУКĂМПА ........ 45
ХĂШĔ ЧЕЕРЕХ? ........ 46
ЮРАТРĂМ ЭП... ........ 47
ИК-ТĂВАТ ЙĔРКЕ ........ 48
АХРĂМ ........ 51


### КАЛАВÇЕМ


МЕРЧЕН ЙĂЛТĂРККИ ........ 52
ХӲРЕЛЛĔ ÇĂЛТĂР ........ 54
ГИПНОЗ ........ 56
НАМĂС ........ 59
ЧĔЛХЕРИ САСĂСЕМ ........ 62
ШУМЕРСЕН ТУРРИСЕМ ........ 64
АркАим ........ 68
СĂМАХ ТĔШШИ ........ 72

**САВЕЛИ УВАРĔ**

**«ТЫМАР»**

Сăвăсем. Калавсем.

Очерк.

**«КОРЕНЬ»**

Стихи. Рассказы.

Очерк.

Редактор: Савельев САС поэт и прозаик, член Союза писателей,

Лауреат нескольких литературных премий.

Корректор: Уваров Алексей

Компьютерный набор и картины на обложках - автора Уварова А.М.

Фото: Тимофеев Владимир

Компьютерная верстка: Хабибуллина Расиля

Литературно-художественное издание

Подписано в печать 20.02.2013 г.

Уч.-изд. Гарнитура «Times New Roman»

Тираж 150. Зак. 164.

Отпечатано в Стерлитамакской городской типографии:

453124, ул. Комсомольская, 82.

